**Николай ГРИГОРЬЕВ**

# *Кайăкъяль кĕввисем*

*Сăвăсем*

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2013

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
Г 83

Г 83 **Григорьев Н.Г.**
**Кайӑкъяль кӗввисем.** *Сӑвӑсем.* – Шупашкар: «Ҫӗнӗ Вӑхӑт», 2013. – 96 с.

Чӑваш Республикин профессиллӗ писательсен тата Раҫҫей писателӗсен пӗрлешӗвӗн членӗн Николай Григорьевӑн иккӗмӗш сӑвӑ кӗнекине чӑваш ҫыннин хальхи шухӑш-кӑмӑлне, туслӑхпа юрату ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсем кӗнӗ.

© Григорьев Н.Г., 2013



*Николай Григорьевич Григорьев*

# КĔНЕКЕНЕ ÇЫРАКАНĔ

Николай Григорьевич Григорьев 1933 çулта раштав уйăхĕн 21-мĕш кунĕнче, Чăваш Республикин Канаш районĕнчи Кайăкъяль ялĕнче çуралнă.

Хусанти медицина институтĕнчен вĕренсе тухнă.

Николай Григорьевич хирург, медицина наукисен докторĕ, профессор, Чăваш Республикин наукăпа искусство академин академикĕ. Вăл Чăваш Республикин наука енĕпе паракан Патшалăх тата Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премисен лауреачĕ.

Николай Григорьевича Чăваш Республикин тата Раççейĕн тава тивĕçлĕ врачĕн ятне панă.

Йăна икĕ хутчен Чăваш Республикин Аслă Совечĕн депутатне суйланă. Вăл РСФСР халăх депутачĕ пулнă.

Н.Г. Григорьев çирĕм пилĕк çул хушши Чăваш Республикин сывлăх министерствинче аслă хирург тата министр пулса ĕçленĕ. Çирĕм çул хушши Чăваш Республикин И.Н. Ульянов ячĕллĕ университетĕнче хирурги профессорĕ пулса студентсене вĕрентнĕ.

Наука тӗлӗшӗпе унӑн 200 яхӑн ӗҫ пичетленсе тухнӑ, ҫав шутра тӑхӑр монографи тата пилӗк изобретени.

Литературӑра ӗҫлеме Н.Г. Григорьев 2000-мӗш ҫулта пуҫланӑ. Иртнӗ ҫулсем хушшинче унӑн вӑтӑр виҫӗ кӗнеки пичетленсе тухнӑ. Вӗсене публицистика, драматурги тата поэзи енӗпе ҫырнӑ. «Кайӑкъяль кӗввисем» – «Каликовские мотивы» – унӑн иккӗмӗш сӑвӑ кӗнеки.

Николай Григорьевича 2003 ҫулта Чӑваш Республикин профессиллӗ писательсен тата Раҫҫей писателӗсен Союзӗн членне йышӑннӑ.

Ӑна ӗҫри ҫитӗнӳсемшӗн ултӑ медаль панӑ. Тата вӑл Чӑваш патшалӑхӗн, Президенчӗн тӑватӑ Хисеп грамотине илме тивӗҫ пулнӑ.

Н.Г. Григорьева Канаш районӗн, Вӑтапуҫпе Кайӑкъяль ялӗсен Хисеплӗ ҫынни ятне панӑ. Ӑна Тӑвай районӗнчи Хисеплӗ ҫынсен кӗнекине кӗртнӗ. Ҫуралса ӳснӗ Кайӑкъяль ялӗнчи ҫӗнӗ урама ун ятне панӑ.

## АННЕ

Тунсăхлă паян мана аннесĕр.
Куç умне килет вăл систермесĕр.
Ăшшăн-ăшшăн ман çине пăхать:
Чиперех-и, тенĕн туйăнать.

Эп те акă ун çулне çитетĕп,
Ватлăх тĕнчине утса кĕретĕп,
Çав-çавах манмастăп ĕмĕрне –
Чи хакли вăл – эсĕ çеç, анне!

Ма тесессĕн – эсĕ пурнăç панă,
Чирлесен – сыватнă, пăшăрханнă,
Калаçма вĕрентнĕ чăвашла,
Юлташпа утмашкăн юлташла.

Сан юну чупать манра, аннеçĕм,
Сан чунна упрать ялан чĕреçĕм.
Эсĕ хывнă ăсăм та манра, –
Эп çавна куллен тытап асра.

Пур-ши тĕнчере санран хаклийĕ?
Эсĕ – чи ырри те чи пахийĕ!
Тĕрĕсех калаççĕ: аннене
Укçалла илеймĕн ĕмĕрне.

*2012*

# АННЕ,
# КИЛ-ХА СЁТЕЛ ХУШШИНЕ

(*Юрă*)

Анне, кил-ха сётел хушшине,
Ларса ăшшăн калаçар,
Ларса ăшшăн калаçар, –
Пурнăç çинчен шухăшлар.

Анне, кил-ха сётел хушшине,
Ларса ăшшăн калаçар,
Ларса ăшшăн калаçар, –
Çамрăклăха ас тăвар.

Анне, кил-ха сётел хушшине,
Ларса ăшшăн калаçар,
Ларса ăшшăн калаçар, –
Çын тунăшĕн тав тăвар.

Анне, кил-ха сётел хушшине,
Ларса ăшшăн калаçар,
Ларса ăшшăн калаçар, –
Шел, эс çуккă юнашар.
Упраймарăмăр, каçар.

*2013*

# ИКĔ САЛТАК

***Аттене***

Астăватăп:
Иккĕн ларатпăр
Кил хушшинче калаçса.
Эс – вăрçăран килнĕ паттăр,
Ман каймалла пиллĕкĕмĕш класа.

Юхать калаçу сукмакĕ
Курскăн та Одер çийĕн...
Калан:
– Эп, ывăлăм, вăрçă салтакĕ,
Эс – Çĕнтерӳ ачийĕ.

Эс çук халь.
Ман çӳç те шуралчĕ,
Тĕнче çаврăнать-мĕн тăвас?
Эп – фронтовик çуначĕ,
Çавна туйма халь те хавас.

*2013*

* * *

Пушкин пекех
мухтатăп эпĕ Мускава,
Тĕнчемĕр умĕнче
вăл тухнă мухтава.

Пуçа таятăп эпĕ
Кремль çăлтăрне,
Чыслатăп Жукова,
çĕршывăн паттăрне.

Кĕреп театра,
кĕреп музейсене,
Чунтан саватăп
ешĕл парксене...

Анчах çӳрет
çак шухăш чĕрере:
Мускав Кайăкъяльсем
пуррипеле хитре.

*2013*

## ÇĂЛКУÇ

Уçланкăра эп сасă илтрĕм:
Ян-ян янрать те йĕс шăнкрав,
Çăлкуç иккен! Мана чиперрĕн
Шывне ĕçме ярать йыхрав.

Эп пытăм, чĕркуçлентĕм, ĕçрĕм,
Тав турăм çутă тĕкĕре:
– Чĕнсе илсех, тăванăм, – терĕм, –
Эс хăналатăн-çке пире...

...Шăнкăртатса та савăнса
Çăлкуç тек чĕнчĕ хăй патне,
Ман хамăн та ыр ĕç туса
Кăшт пулăшасчĕ çынсене.

*2013*

## КАЙĂКЪЯЛЬ ÇĂЛКУÇĔСЕМ

Тăрна куç пек тăрă
Кайăкъяль çăлкуçĕсем,
Çутатса тăраççĕ
чунăма вĕсем.

Вĕсенче çĕрле
выляççĕ çăлтăрсем.
Курăнаççĕ вĕсенче
хитре сăнсем.

Кунсерен кунта
анать пĕр сар пике,
Унăн çамрăк сăнĕ-пичĕ
нар пекех.

Вăл кайсассăн эп пырап
çăлкуç патне,
Тĕкĕр çутинче куратăп
ун сăнне.

*2013*

* * *

Шыв-шур типсессĕн
Уй-хирте сухаçă
Тĕренĕпе кас хыççăн кас тăвать.
Пĕр шутласассăн,
Пурнăç та сухаçă:
Çамка çине канмасăр йĕр хывать.

*2013*

## ПУРНĂÇ

Эрнерен уйăх кĕлти çыхатпăр,
Уйăхран хыватпăр çĕн капан.
Ĕмĕре тăсас тесе шутлатпăр, –
Тупсăмне тӳрех ăçтан тупан.

Хăшĕсем пуйма тесе каяççĕ,
Чунсăр таврăнаççĕ каялла.
Тăвансем, ăçта телей сутаççĕ?
Тен, ăна çумрах шырамалла?

*2013*

## КАЙĂКЪЯЛЬ ТАКМАКĔСЕМ

Кайăк пек маттур вĕçеççĕ
Кайăкъялĕн хĕрĕсем,
Кăйкăр кайăк пек çӳреççĕ
Кайăкъялĕн каччисем.

– Эс те кăйкăр кайăк-и?
Ыйтрăм эпĕ савнирен.
Кăйкăртан юлайăп-и? –
Терĕ Петĕр бизнесмен.

– Эс те сарă кайăк-и? –
Ыйтрĕ Петĕркке манран.
– Савнирен юлайăп-и
Юрăран та ташăран.

Ники-ники купăсне
Шăрантарăр хытăрах.
Кайăкъялĕн кĕввине
Янратар-ха вăйлăрах.

Кала, Сашук, савăкрах,
Сала кайăк ташшине.
Сала кайăк ташшине мар,
Кайăкъялĕн ташшине.

Савни, юратан пулсан,
Мана килсе ура тап,
Эсĕ мана юратсан
Эп те сана юратап.

Ăмăртуллă ташшине
Акă çапла ташлаççĕ,
Кайăкъялĕн уявне –
Акă çапла тăваççĕ.

*2013*

* * *

Санпа тĕл пултăмăр ирпе
Хаваслăн утрăмăр хирпе.

Пире пуç тайрĕç пучахсем
Утмăл турат çăлтăрĕсем.

Ыраш çинчи ыр путене
Ăш пиллĕн пачĕ сассине.

Çавăнтанпа эпир пĕрле
Ик шурăмпуç çăлтăрĕсем.

Тавах сана, хĕвеллĕ ир,
Тавах сана, тăван уй-хир.
*2013*

* * *

Иртсе кайрĕ хĕл,
Çитрĕ кĕркунне.
Сар пикеçĕм, пĕл:
Юрату чĕнет.

Урамаваскать
Пурте каçхине.
Ма тесен, туять:
Юрату чĕнет.

*2013*

## ХĚВЕЛ ПЕК

Хěвел пек маншăн санăн кăмăлу:
Вăл ăшăтать, чуна уçса ярать,
Çапла кашни хаваслă тěл пулу
Мана вěр-çěн вăй-хал хушса парать.

Вěри чěрем çакна туйсах тăрсассăн
Эп санпала пуласшăн юнашар:
Пур йывăç-курăк хěвеле савсассăн
Епле ман сан пата туртăнас мар?

*2013*

* * *

Пушăлла чухне те,
туллилле те
Çаврăнать пĕр евĕр
хултăрчă.

Пирĕн юрату –
чĕре тивлечĕ –
Нихăçан та тулли мар
ан пултăрччĕ.

Эс мана туллин
парсассăн алă
Эп те çав хăватпалах
тытам,

Çавăн чух кăна
чун савăнмалăх
Çирĕп пулĕ
ĕмĕрлĕх ытам.

*2013*

## ЭПĔ СИСРĔМ

Эпĕ сисрĕм хĕвел хĕртнине,
Туйрăм унăн паха ăшшине.
Сар хĕвел ăшши пек килекен
Туйăм пулчĕ юрату иккен.

Сар хĕвелĕ ăçта-ши тесе
Пăхрăм эпĕ хăю çитерсе.
Ман чуна вучах пек чĕртекен
Кӳршĕ ялăн сар пики иккен.

Алă патăм эпĕ савăнса,
Вăл йăл кулчĕ ман çине пăхса.
Тĕл пулатпăр халĕ каçсерен,
Юрату тени çапла иккен.

*2013*

# САНА САВАТĂП

Сана
Вĕри чĕремпеле саватăп
Пĕрремĕш хут тĕл пулнăранпалах.
Эс ман çунатăм,
Эсĕ ман хăватăм,
Эс маншăн пĕтĕм пурнăçпа танах.

*2013*

## ÇУРКУННЕ ПЕК КИЛЧĔ ЮРАТУ

Пахчасем шуралчĕç,
Чечексем вăранчĕç,
Симĕс тум тумланчĕ
Çывăхри сăрт-ту,

Шăпчăк хавхаланчĕ,
Туйăм çунатланчĕ,
Çуркунне пек килчĕ
Пирĕн юрату.

*2013*

## ХĔВЕЛĔМ

Эсĕ ман телейĕм,
Эсĕ ман хĕвелĕм,
Ман ятпа çеç килнĕ
Эсĕ тĕнчене.
Эс, шанма пĕлмесĕр
Ешерен чечекĕм,
Вăй парса тăратăн
Манăн чĕрене.

Эс мана ăнлантăн,
Эп сана ăнлантăм,
Алран-ал утатпăр
Пурнăç çулĕпе,
Кăнтăрла та, каç та
Çуттăн çутататăн,
Çавăнпа та маншăн
Çывăх çут тĕнче.

*2013*

# АН ВАСКА

Эс паян та хыпăнан киле кĕме,
Ма васкан-ши «Чипер кай» теме?

Çăлтăр пулса вĕçсе килтĕм сан пата,
Куç шăрçи пек упраса чунри ята.

Каçхи шуçăм пулса антăм тӳперен,
Ăшă варкăш пулса çитрĕм уй-хиртен.

Кил, савниçĕм, пĕр самантлăх ман çума, –
Эпĕ хатĕр ĕмрипех пĕрле утма.

*2013*

* * *

Кăн-кăваккăн килет кăвак шуçăм
Каç сĕмне çĕнтерӳллĕн сирсе.
Эп сана халь курап, кăвак куçăм, –
Эс тăратăн мана илĕртсе.

Сар ыраш хушшинчен тем каласшăн
Утмăл хĕлĕхлĕ утмăл турат,
Савнă тусăм, сана эп курасшăн –
Чунăмра хушрăм çĕнĕ çунат.

Каç енне çӳл тӳпе кăвакарчĕ
Сан куçун сеп-сенкер хĕмĕпе.
Тĕл пулар-и, кăвак кăвакарчăн,
Киленер юрату юррипе.

*2013*

* * *

Сар сăнпала
 килет-çке хура кĕр,

Тӳрех калам,
 шăрçа çути пек хĕр,

Атте килне
 кин ячĕпе эс кĕр, –

Пуçлатпăр, тусăм,
 пурнăçра çĕн йĕр.

*2013*

* * *

Хур кайăксем вĕçеççĕ кăнтăра.
Ыран, савни, тухса каяп çара.

Ан хурлансамччĕ, чунăм, ан хурлан,
Яланлăх уйрăлмастăп-çке санран.

Ик чĕрене памашкăн пĕр тĕрев
Юратăва та кирлĕ тĕрĕслев.

*2013*

* * *

Улăхра текерлĕк макăрать.
Мĕншĕн манăн чунăм хурланать?

Пурнăçри пĕрремĕш юрату
Мĕншĕн пулчĕ маншăн вăрăм ту?

Шанăçпа ярсаттăм хăтана
Хĕр каланă: «Эпĕ вăтанап».
*2013*

## СИВĔЧЧĔ ИРПЕ ПАХЧАМĂРТА

Сивĕччĕ ирпе пахчамăрта
Шап-шурах тăм ӳкнĕ вăхăтра,
Шăпчăксем те тахăш кукăрта
Пытанса ларатчĕç шăпăртах.

Акă эсĕ çитрĕн каç енне...
Сив çилсем çухалчĕç çырмара.
Шăпчăк парнелет чечексене
Иксĕмĕр юратакан юрра.

*2013*

# ПИРЕ ВĂЙ ПАЧĔ ПИРĔН ЮРАТУ

Пĕлетпĕр:
Пурнăç çулĕ такăр мар:
Усал тени
Çӳрет вăл юнашар.

Ĕнер телей
Сапатчĕ сар хĕвел,
Паян –
Ыр сунаймасть пире тĕпел.

Тав, мăшăрăм,
Эс ман çумра пулни,
Эпир ялан
Пĕр туртара тăни.

Иксĕмĕре
Вăй пачĕ çĕнтерме,
Ĕмĕтсене
Чиперрĕн çитерме.

*2013*

## ÇЕМЬЕ

Çемье пуçланать ик çынран.
Ик чунăн пĕр сулăм пулсан –

Карти те хури çĕкленет,
Çурт-йĕр те кĕçех тĕпленет.

Килеççĕ вара ачасем,
Йăлтах хамăр пек-çке вĕсем.

Пурне те туртать кил ăшши,
Асран тухайми кил хушши.

Халь, мăшăр, кама тав тăвас?
Сана пуç тайма эп хавас.

*2013*

* * *

Юрату та чирлеме пултарĕ,
Ма тесессĕн, вăл та тимĕр мар.
Кам ăна сиплейĕ те хăтарĕ?
Тухтăрне ăçта кайса шырар?

Тен, юлташăмăр пире ăнланĕ?
Пурпĕр пĕтĕмпех унтан килмест.
Хамăрăн юратăва, тăванăм,
Хамăр çеç чĕртетпĕр, хамăр çеç.

*2013*

# ÇУРЛА

Мĕн вăл çурла – пĕлмеççĕ ачасем,
Вĕсем ăна алла тытса курман.
Ăна аван туяççĕ манăн пўрнесем,
Çичĕ çултах çурлапала кастарнăран.

Çурла!
Хире комбайн киличчен
Тырра вырса пуçтарнă вăл кăна,
Çавăнпала атте кĕлетĕнче
Хисеплесе усратăп эп ăна.

Паян тырри те нумай мар хирте,
Унта хуçаланать мăян, пиçен.
Эй, тĕлĕнĕччĕç несĕлсем пиртен,
Эпир çапла иртĕхнине пĕлсен.

Аки-сухи паян хисепре мар,
Ертўçĕсем халь аслă çăкăртан,
Выринччĕç çурлапа пĕрер гектар –
Вара хресчен ĕçне ăнланĕччĕç пăртак.

*2013*

## ЕНТЕШЁМСЕНЕ

Сатăрка çырми, Вăтапуç çырми...
Çавăнта юхать Вăта шывĕ,
Вăтапуç çырми – кĕвĕ пуçарми,
Ун кĕвви валли кам кĕвĕ хывĕ?

Çав çăлкуç кĕвви, таса шыв çемми
Аслă несĕлĕн пуçне çавăрнă,
Пăлхар чăвашсен вун икĕ çемйи
Вăрмана килсе кил-çурт çавăрнă.

Юмансем касса, кăкне кăкласа
Тыр акма вĕсем уй-хирне тунă,
Виç ĕмĕр хушши хуллен сарăлса
Кайăкъяль çапла хăй çулне уçнă.

Тĕрлĕрен килет пурнăç самани:
Пушарĕ тухать, шартлами хуçать,
Е пуçран çапать вăрçă тамаши –
Пурри-çуккине пуçтарса каять.

Маттур арçынсем, çамрăк йĕкĕтсем
Тăшманпа вăрçма тухса каяççĕ,
Килекен килет, килейменнисем
Вăрçă хирĕнчех выртса юлаççĕ.

Халь пирĕн ялта çĕр вун çичĕ кил,
Пурăнать унта виççĕр аллă çын.
Кашнинех Çӳлти Турă панă пил,
Кашниех телей курма килнĕ чун.

Этемрен вăйли çук çут тĕнчере,
Анчах унăн та хăй усалĕ пур.
Пыра чарманни ярать чир-чĕре,
Мула хапсăнни çуратать хĕн-хур.

Хаклă ентешсем, ырă тăвансем,
Ма пуçларăм эп çакă сăмаха?
Ырра пăхăнса, ырра ĕненсе
Пурнăçа кĕртер аслă чăнлăха.

Тĕрĕс шухăша ярар мар асран,
Йăнăш шухăша хăвалар пуçран,
Аки-сухине ярар мар алран,
Чун хĕне лекет вăл алран кайсан.

Ваттине хисеп, яшшине – вăй-хал,
Çут ĕмĕтлине – хĕвел пек хавал.
Пурте тытăнса çирĕп алран ал
Тăванла пурнар. Çакă ман халал.

*2013*

# МАМИ ЯЛĔ

Мами ялĕ –
кукаçипе кукамай ялĕ.
Унти шкулти пĕрремĕш класс –
ман чун хавалĕ.
Хуллен вĕрентĕм
вулама, çырма,
Шут хисепне хушма та кăларма.
Унтри куккамăр
вилчĕ вăрçăра,
Нумай суранлă килчĕ
Лариван кукка,
Палюк кукка таврăнчĕ
аран-аран,
«Пĕтертĕмĕр капла
йăхри кăка» –
Тесе чирлерĕ,
вилчĕ кукамай
Куллен-кунах
куççуль юхтарнă май.
Ăна пытарнă чух
аннерен эп ыйтрăм,
Ӳссен тухтăр пулма
шут тытрăм.

Çак Мамирех
    вăрçă пĕтни çинчен эп илтрĕм,
Ялан атте таврăнасса
        эп кĕтрĕм.
Вăл килчĕ
        хĕрĕх пиллĕкмĕш çулта,
Вара эп пурăнтăм
        хамăр ялта.
Мами! Эп пуç таятăп
        санăн умăнта,
Кунти шкулта
        эп тухнă-çке çутта.
Тавах кукаçине –
        Кондратий Захаровича.
Кукамая –
        Васса Ивановнăна,
Пĕрремĕш вĕрентекенĕме
        Елена Трифоновнăна.

*2013*

# ВАЛЯ ЙĂМĂКĂМА

Çакна ху астумастăн та пуль эсĕ:
Аттемĕр таврăнсассăн вăрçăран
Шинеллĕ çын кам иккенне пĕлмесĕр
Сĕтел айне пытантăн эс унран.

Кайран, анне ăнлантарса парсассăн,
Шинеллĕ çын аттемĕр пулнине,
Ун аллинче вылярăн эс хавассăн
Сиссе вăл саншăн тунсăхланине.

Атте-анне... Ах, мĕн тери-ши хаклă
Пире чун панă ытарми çынсем,
Укçа та, мул та тĕрлĕрен тумхахлăх
Вăйне сирсе килеççĕ çав сăнсем...

Çапла...
Эс ӳсрĕн, кĕç çемьеллĕ пултăн,
Ачу та килчĕ хăй черечĕпе,
Анчах пит шел: эс мăшăрусăр юлтăн,
Тăпри ирех тăрланчĕ хĕреспе.

Паян чипер пăхса усратăн, Валя,
Атте-аннемĕр килĕн хисепне.
Пирте – вĕсен чун-чĕринчи хавалĕ,
Хамăр чыспа чыслар вĕсен ятне.

*2013*

## ЧĔРЕ

*Василий Михайлова*

Ĕпле аван чĕреччĕ сан чĕрӳ:
Мĕн чухлĕ ырă кăмăлччĕ унра,
Хирĕçлекеншĕн – хам ĕнентерӳ,
Вăл ман вĕри чунра, вĕри юнра.

Анчах, мĕскер тăвас, çав ыр чĕре
Сасартăк, тусăм, ларчĕ чарăнса,
Вăл уйăрчĕ пире: эс халь – лере,
Эп ак кунта ларатăп хурланса...
*2013*

# ТУТАРСТАНĂМ

*Порфирий Афанасьева*

Тутарстанра çуралнă эсĕ,
Эп Кайăкъяль ытамĕнче.
Анчах курса çӳрес тесессĕн
Этемшĕн тăвăр çут тĕнче.

Тутарстана мана чĕнтерчĕç
Хирург ятне илсессĕнех,
Ун чух самолетсен хăвачĕ
Пит пулăшатчĕ çынсене.

Çын, калăпăр, чирленĕ йывăр
Пĕр-пĕр Нурлат таврашĕнче,
Эпир вĕçсе çитетпĕр хăвăрт:
Сехетренех ун патĕнче.

Миçе çынна çăлса хăварнă
Актанăшра, Маматăшра,
Павлă енче те анса ларнă
Сенкер тӳпеллĕ сывлăшран.

Мĕскершĕн аса илтĕм эпĕ
Самолетпа çӳренине?
Чун варринче ларан хисепĕм
Халь çĕнĕрен вăй илнине.

Сана та, вулаканăма та
Тепĕр хутчен калас тесе
Хавалăмпа эп çунатлантăм
Çурхи чĕкеç пек çĕкленсе.

Авкаланса юхса выртатчĕ
Сан йăлтăркка Çарăмсану,
Ман чĕрене те кăтăклатчĕ
Хăш чух йĕркеллĕ ăмсану:

Чăваш çынни маттур-çке, теттĕм,
Шывсем тавра ларса тухса
Малашлăх йĕркелет килпетлĕн
Хĕвел çути çине пăхса.

Шăпу халь ĕнтĕ ак сана та
Тымар яртарчĕ хулара,
Чуну сан кĕвĕлет соната
Поэзи тенĕ хутлăхра.

Çав çулсене аса илӳçĕн
Тӳрех шăнкăравлап сана,
Салам сана, хастар иптешĕм,
Салам тăван Тутарстана!

*2013*

# САЛАМ, ЭЛЛИ

***Э.М. Юрьева***

Пĕр тăвансем пек
Кӳршĕллĕ пурнаттăмăр
Шĕкĕр хулан
Хитре урамĕнче.
Кашни кунах
Хиселлĕн калаçаттăмăр
Шур шупăр уртнă
Шупашкар çинчен.

Ак татăлчĕ
Тĕл пулусен хаваслăхĕ,
Яту халь –
Иртнĕ вăхăтпа асилмелли.
Пуçне таять
Сан Асăну хăмин мăнаçлăхĕ,
Ăна куллен калатăп эп:
– Салам, Элли...

*2013*

## ВАЛЕРИ ТУРКАЯ

Тӳпере тăри юрлать,
Çырмара çăлкуç вылять...
Çакă пурнăç кĕввине.
Чăваш енĕн çеммине,
Эй, хисеплĕ Валери,
Пĕрле тăрса итлер-и?

Пирĕн чаплă Шупашкар –
Йăлтăр-йăлтăр пархатар...
Çеçпĕлĕмĕр музейне,
Хусанкайăн керменне,
Эй, хисеплĕ Валери,
Пĕрле çитсе килер-и?

Каçалсем те нимере,
Канашсем те нимере,
Пĕрлĕхре ĕç ăнăçать,
Пурнăç телее куçать.
Эй, хисеплĕ Валери,
Ăмăртмалла ĕçлер-и?

*2013*

# ТАНĂШ ЯЛĔН ПĔВИ ЧАПЛĂ ТЕТ

***Юрий Сементере***

Танăш ялĕн пĕви чаплă тет,
Куç кĕски пек çиçсе выртать тет,
Çӳлтен пăхсан тĕпĕ курнать тет,
Ылтăн пулă ишсе çӳрет тет,
Эх!

Хӳхĕм чăваш пикипе унта
Берлускони шыва кĕнĕ тет,
Юмахри пек ешĕл çыранта
Шампань эрех пĕрĕхетчĕ тет,
Эх!

Çитеймерĕм Танăш пĕвине,
Илтеймерĕм хăмăш кĕввине,
Кураймарăм ылтăн пуллине,
Сыпаймарăм шампань эрехне,
Эх!

Аллă çухрăм ытла инçе мар,
Сементерĕм, тен, пĕрре каяр?
Чăн чăваш чĕриллĕ чăваша
Илсе кай, тархасшăн, Танăша?
Эх!

*2013*

## ГЕРМАН ЖЕЛТУХИНА

Кăйканар тăрринче кăйкăр вĕçет,
Чунĕ иртмест хăй ирĕкĕнчен.
Шухăш вĕçет пуçра, шухăш вĕçет,
Тухаймасть-çке хăйĕн йĕрринчен.

Кăвакалĕ кăвак, мăйĕ симĕс,
Пĕсехи çинче ахах шăрça.
Ай, пурнăçăм, пурнăç, кăвак тинĕс,
Шăпамăртан иртес çук-тăр çав.

Шупашкар керменĕ шурă-шурă,
Унпа юнашарах çĕн тĕрме.
Çавăтсах пырать пулсан та Турă –
Усала пит йывăр çĕнтерме.

Тăвалла талпăнса утнăçемĕн
Аналла анса канар-и,
Тем те пĕр, тăванăм, тӳснĕçемĕн,
Сар кайăк кĕввине тăнлар-и.

*2013*

* * *

Шупашкар варринче
лаpать Çеçпĕл Мишши.
Ун патне
чечекпе эпĕ пытăм.
«Ку асар-писерте
пирĕн чаплă чĕлхе пĕтмĕ-ши
Е мĕнле-ши?» –
тесе унтан ыйтрăм.

Тĕлĕнсе пăхрĕ Çеçпĕл
хăй ентешĕ çине,
Куçĕнчи вут-хĕлхемĕ
çиçрĕ ун çиçĕм евĕр.
Вăл каларĕ: «Сире тыттарсаттăм
чĕлхе шăпине,
Сирĕнтен, сирĕнтен йăлт килет,
чăвашсемĕр!»

*2013*

## ШУР КĂМПА

Нăтăрт-нăтăрт туса
Касăлать шур кăмпа,
Пĕр пăхсан –
Шĕлепкеллĕ капан пек,
Эп сăнатăп сана
Ытарми кăмăлпа,
Çутçанталăк
Хайланă ӳкерчĕк.

Уçăлмалăх кăна
Эп килсеттĕм кунта,
Ачаран туслă пулнă
Вăрманăм.
Пĕр кăмпа, ик кăмпа,
Сылтăмра – çич кăмпа...
Кĕç тулса та
Ак кайрĕ çатанăм.

Халь утап килелле.
Кайăкъяль еннелле,
Кăмпаран мĕн тăвам-ши,
Тесе шухăшлатăп.
Эп шеллетĕп ăна
Кĕртме тĕпеле:
Вĕретме те,
Ăшалама та.

*2013*

# ШПИОН

Эшелонсем Хусаналла васкатчĕç,
Пĕрмай чупатчĕç вăрçă ĕçĕпе.
Института кайма тапраннă каччă,
Вакун тăрне сиксе çӳлевĕç пек,
Тем самантра эп лăпчăнтăм, пытантăм,
Пĕр сывламасăр выртрăм çил çинче,
Анчах чее шăши пек шăп выртсан та
Хуралçă тытрĕ мăн кĕпер енче.
Вара мана шпион тесе тĕпчерĕç
Хаяр НКВД хĕсметçисем.
Юрать-ха, институтрисем тивмерĕç...
Эх, студентсем,
Эх, вăрçă çулĕсем...

*2013*

# МĂКĂНЬ

Çĕнтерӳ кунĕнче хĕрлĕ мăкăнь
Шăтса тухрĕ атте пахчинче,
Ача чух курăнан фронт сулмакĕн
Туйрăм эп вĕсене хальхинче.

Тăм та ӳкрĕ пуль, çил те алхасрĕ,
Пурпĕр мăкăнь усмарĕ пуçне,
Манпала вăл салтак пек калаçрĕ,
Ялав пек тытрĕ хăй çеçкине.

Мăкăнь, мăкăнь...
Сана эп акманччĕ,
Эс хăвах шăтрăн манăн ума,
Манăçми вăрçăн йывăр саманчĕ
Тĕтрелетрĕ каллех куçăма.

...Утайми суранланнă аттеçĕм,
Юн юхать сулахай уринчен...
Юн пулса-ши эс килтĕн, чечекĕм,
Бомба ӳкнĕ Десна хĕрринчен?

*2013*

# КАЙĂКСЕМ

Кайăкъяль еннелле çул тытаççĕ
Кĕрнекленнĕ кĕр кайăкĕсем.
Вăта шывĕн хĕрне пухăнаççĕ
Кураксем, пăчăрсем, чĕкеçсем.

Йăмрасем, хурăнсем сараласçĕ,
Кайăкъяль – кайăксен тĕп хули,
Ахаль мар ман ял çийĕн çакаççĕ
Кайăксем сурпан пек ал шăлли.

Кайăксем, халь сире эп пăхап та –
Хушăнать мăшăр çăмăл çунат,
Шухăшпа эп çӳле улăхатăп,
Чун-чĕреçĕм юрласшăн çунать.

Кайăкъяль пахчинче эп те кайăк,
Эп те шăпчăк шур çĕмĕрт çинче,
Савăнса юрлама мана лайăх
Тăван енĕн сенкер сăпкинче.

*2013*

## ЮРĂ

Хусан çинче хут вылять,
Чĕмпĕр çинче чĕн вылять.
Кайăкъялĕн урамĕнче
Каччăпала хĕр вылять.

Сарă тулă кулачи
Сарă çăва юратать,
Кайăкъялĕн сар ачи
Сарă хĕре юратать.

Кайăкъяльне килтĕмĕр,
Сарă кайăк пултăмăр,
Кайăк евĕр вĕçрĕмĕр,
Вылярăмăр, култăмăр.

Кайăкъялĕн тăвайккине
Ярăнса якатар-и,
Сар ачипе сарă хĕрне
Ăраскалне сунар-и.

*2013*

* * *

Тăванăм,
Клиника палатинче
Сăну кичемччĕ
Кĕрхи пек пĕлĕт туртнă
Кун майлах...

Епле аван:
Ака туйра
Хура куçу хĕмленчĕ
Çут шурăмпуç
Çăлтăрĕпе танах.

*2013*

## ÇУМĂРПА ЮМĂР

Шăпăр-шăпăр ташласа
Çурĕ çăмăр,
Калăн, шăлчĕ чашласа
Йĕпе шăпăр.

Сар хĕвел те çавăнтах
Кулса ячĕ,
Тухса ларчĕ туххăмрах
Асамачĕ.

Вĕт кăмпа укăлчара
Шăкăр-шăкăр,
Вăйă карти пек çавра, –
Пыр та шăхăр!

– Тав сана, – теççĕ çынсем, –
Ăшă çумăр,
Ăнланмарăм эп, туссем:
Тен, ку юмăр?

*2013*

* * *

Эс тухăçра
Ют çĕрсенче çӳренĕ,
Эс анăçра та пулнă сахал мар,
Анчах чăвашлăхран ытла,
Сенкер сиренĕм,
Тупман тивĕçтерӳллĕ
Пархатар.

Чăваш ачи,
Сенкер тӳпе сĕренĕ,
Эп хам та тĕнче касрăм
Ахалех.
Кил ман пата,
Кил хăвăртрах, сиренĕм,
Ик тăлăх чунăн
Пулмалла пĕрлех.

*2013*

* * *

Куртăн-и, пикеçĕм:
тĕксĕм тӳперен
Çутă çăлтăр ӳкрĕ
ярăнса хитрен?

Çăлтăр мар вăл, чунăм,
чĕрене чĕртсе
Эпĕ çырса хутăм
«Юратап» тесе.

*2013*

* * *

Мăшăр акăш вĕçетчĕ сенкер тӳпере,
Юрату палли пек курăнатчĕ пире.

Таçта те сунарçă тĕллерĕ пĕрне, –
Чул пек персе анчĕ вăл Атăл хĕрне.

Тепри вара...
Курăр,
Хăй ирĕкĕпе
Чăмрĕ те –
Çапăнчĕ
Чул тăррине...

*2013*

## АННА АППА КАНАШĔ

– Эс-и ку, Анна аппамăр?
Чĕререн салам калатпăр!

– Эп-ха ку. Кĕрсемĕр, иртĕр.
Мĕн сăмахпала çӳретĕр?

– Çак Канаш енче, аппамăр,
Апат-çимĕç енĕпе,
Ӳстермесĕрех калатпăр,
Тупаймастăн сирĕн пек
Пăтă пĕçерекенни,
Шӳрпе вĕретекенни,
Улма ăшалаканни,
Шаркку ăсталаканни...

– Ку, чăнах та, тĕрĕсех,
Апат-çимĕç пĕçерсех
Ирттеретĕп ĕмĕре.
Яккупа иксĕмĕре
Халь нумай та кирлĕ мар:
Янтă çăкăрпа тăвар,
Анчах кăмăлшăн тесен,
Тата сывлăхшăн тесен
Апата ылмаштарма,
Улăштарма пĕлмелле,

Тем те кӗтен хырӑма
Ӑспа тивӗҫтермелле.

– Тавтапуҫ сана, аппа,
Шӑпах ҫавӑ ыйтупа
Канашлама килтӗмӗр,
Чӑрмантарас терӗмӗр.

– Юрать, юрать, ентешсем,
Кайӑкъялӗн ачисем,
Мӗн пӗлнине калӑпӑр,
Сирӗнтен пытармӑпӑр.

– Ҫимӗҫ тенӗрен, аппа,
Ҫимӗҫ халӗ тӗрлӗрен,
Анчах санӑн шухӑшпа,
Пурнӑҫри ӑсталӑхпа
Пуринчен усӑллисем,
Маларах ҫимеллисем
Хӑшӗсем-ши вӗсенчен?

– Усӑлӑх енчен пӑхсан
Шурӑ пуҫлӑ купӑстан
Усси пысӑк ҫав тери,
Мӗншӗнне пӗлетӗр-и?
Витамин сӗткенӗпе,
Сиплекен йӳҫекӗпе

Купăстамăр пит пуян,
Çавăнпа та, ачасем,
Кулинари ăстисем,
Çимелле ăна ялан.
Чĕрĕлле çисен те лайăх,
Салатсем тусан та лайăх,
Йӳçĕтсе тăварласан
Купăста сĕре аван.
Çийĕр купăста, атьсем,
Селĕм пулĕç сывлăхсем!

– Кавăн ятлă çимĕçе
Юратаççĕ нимĕçсем...

– Кавăна-и? Чăвашсем те
Хисеплеççĕ ĕлĕкрен,
Кавăнран тăваççĕ тем те
Тутлăран та сиплĕрен.
Ларт ăна кăмакана –
Сывлăх парĕ вăл сана:
Каротин шучĕпелен
Ирттерет вăл кишĕртен,
Чĕрене те вăл сиплет,
Пуççене те вăл имлет,
Çийĕр кавăн, ачасем,
Лайăх пулĕç кăмăлсем!

– Пахчара улма-çырла
Лайăх пулчĕ-çке ытла...

– Лайăх пулчĕ – пит аван:
Çав пахчан – хуçи аван,
Пăхмасан, ĕçлемесен
Тупăш çук анкартинчен.
Слива, груша, панулми
Пулĕç çулçă палăрми.
Ыр пахчаçă тăрăшсан,
Майне пĕлсе вăй хурсан.

Чĕрĕлле чух чĕрĕлле
Сад çимĕçне çимелле.
Типĕтсе компот тусан
Вăл хĕлле сĕре аван,
Эсĕ хăвăнта ялан
Ывăнми вăй-хал туян.
Çи, ачам, улма-çырла,
Утса çӳрĕн паттăрла!

– Эп вара, Анна аппа,
Питĕ туслă пătăпа.
Хура тул пăтти тесен
Е маннă пăтти тесен –
Явтаратăп савăнсах,
Хырăма панк тултарса...

– Пит маттур! Мухтап сана,
Пăтă юратакана,
Пăтăсемпе туслăран
Çакна ыйтам-ха санран:
Аса ил-ха çинине
Сĕлĕ пăтти тенине?

– Сĕлĕ пăтти? Эп çимен,
Ун пекки мана лекмен...

– Шел, тăванăм, питĕ шел,
Хăвăртрах тупсамччĕ мел
Сĕлĕпе туслашмалли,
Тиха пек вăй хушмалли...
Сĕлĕ пăттине çисен
Улăп пек патвар ӳсен!

– Эп, Анна аппа, ялан
Савăнап пăрçа пулсан,
Симĕсле ăна татап,
Кĕсьере ялан тытап...

– Питĕ тĕрĕс! Ыр пăрçа
Хырăмпа кĕмест вăрçа,
Çавăнпа, туссем, аван
Туслашсан пăрçапалан:
Пурнăçри сукмакпалан
Пăрçа пек хитре чупан...

Манăн çамрăк тусăмсем,
Кайăкъяль чĕкеçĕсем!
Итлĕр эп каланине,
Çийĕр эп мĕн сĕннине,
Сирĕнтен чăн-чăн чăваш
Ӳстĕринччĕ – ман канаш!
*2013*

## ÇЎЛ ТЎПЕРИ ÇĂЛТĂР

Çӳл тӳпери
çап-çутă çăлтăр
Венчет çĕрри пекех çунать.
Çиçсе илет те йăлтăр-йăлтăр
Иксĕмĕре çапла калать:

«Чиркӳ
сăваплăхра пиллерĕ,
Çап-çамрăк мăшăр, халь сире,
Çĕрпе тӳпен таса кĕперĕ
Ялан упрантăр чĕрере...»

...Çӳл тӳпери
çап-çутă çăлтăр
Венчет çĕрри пекех çунать.
Çиçсе илет те йăлтăр-йăлтăр
Пире каллех телей сунать.

*2013*

* * *

Шусах пырать кунсен черечĕ
Шут шăрçисем вылянă пек,
Çулсем те вĕçĕмсĕр вĕçеççĕ
Çӳл тӳпери хуркайăк пек.

Кун-çул мĕскер сунать – тӳсетпĕр:
Е сиввине, е шăрăхне,
Лексе пулайĕ-ши, – пĕлместпĕр, –
Çӳлти çăтмах реххетлĕхне.

*2013*

* * *

Юрату сукмакĕ авкаланчăк,
Вăта шывĕн çулĕпе пĕрех:
Ун аналалла юхас таланчĕ
Çырлахтармĕ, мăшăрăм, пире.

Атăлпа аналалла кайсассăн
Пăрахут çитет Аçтăрхана.
Ют çĕрте виç кун хăналансассăн, –
Чун туртать-çке хамăр хуланах.

Юрату сукмакĕ авкаланчăк:
Такама та юратма пулать,
Хамăрта яш чух çуралнă шанчăк
Пур илĕртӳрен те хăтарать.

*2013*

## ЛАНТӐШСЕМ

Лантӑшсем – хаваслӑ тантӑшсем –
Парнелерӗҫ ырӑ шухӑшсем:

– Илсе кай-ха эс пире киле,
Мӑшӑрна каҫ кӳлӗм парнеле.

Пырӑпӑр эпир хаваслансах,
Юрату илемӗ пек пулса...

Путрӑм эпӗ йывӑр шухӑша,
Пурпӗр татрӑм капӑр лантӑша.

Аллӑмра – хам мӑшӑрӑм алли,
Лантӑш – пирӗн юрату палли.

*2013*

## САН ЯТУПА

Саншăн çуралаççĕ чечексем,
Çăлтăрсем сан ятупа çунаççĕ,
Санăн ятупа вĕри хĕлхем
Вĕçтерет-çке юрату кăвайчĕ.

Сан çинчен юрлаççĕ шăпчăксем,
Сарă кайăксем сана мухтаççĕ,
Сан пата туртать мана чĕрем,
Санпала пуласшăн ун хăвачĕ.

*2013*

# МĂНУКĂМА

Лайăххи те пулĕ пурнăçра,
Тăвалла хăпарнă хушăра:
Ăнăçу та килĕ, çĕнтерӳ те,
Пурпĕр эсĕ çухалса ан кай,
Тав туса тус-тăванна пуç тай,
Шĕшкĕ пек çил вĕрнипе ан авăн,
Ăраскал хăвпа пĕрлишĕн савăн.

Усалли те пулĕ пурнăçра,
Тăвалла хăпарнă хушăра,
Кĕвĕçӳ те, ăмсану та пулĕ, –
Хăпаймасть унтан чăваш кун-çулĕ,
Пурпĕр эсĕ çухалса ан кай,
Тăшманна та ăнланса пуç тай,
Шĕшкĕ пек çил вĕрнипе ан авăн,
Ăраскал хăвпа пĕрлишĕн савăн.

*2013*

* * *

Эпир юратăва упратпăр,
Вăл хăй те пулăшать пире,
Кам юратать – çурт-йĕрĕ капăр,
Хăпартланса тапать чĕре.

Мĕн вăл телей, тесе ыйтаççĕ
Пĕр-пĕринчен хăш чух çынсем.
Çакна ялан асра тытасчĕ:
Телей вăл – юрату, туссем.
*2013*

* * *

Мăшăр акăш çӳллĕ тӳпере
Ярăнса вĕçетчĕ çĕн çĕре.
Пăхрăм та çак акăшсем çине –
Куртăм вĕсенче иксĕмĕре.

Шăкăлчи сассиллĕ ĕшнере
Икĕ вĕрене пĕр ӳсĕмре.
Пăхрăм та çав йывăçсем çине –
Куртăм вĕсенче иксĕмĕре.

*2013*

## САРĂ ЛĔПĔШ

Сарă лĕпĕш хыпăнать
Чечекрен чечек çине,
Вĕçнĕçемĕн вăл суйлать
Хитререн те хитрине.

Хĕлхеме, хыт вĕçнипе
Пăтраштарать чечекпе,
Пырса кĕрет вут çине
Тытать хăйĕн ĕмĕрне.

Сарă хĕр те хăш чухне
Хитрине кăна курать,
Каччăн пушă сăмахне
Ĕçĕнчен мала хурать.

Йĕкĕте те çав майлах
Сар хĕр куçĕ çавăрать,
Ăнланать вăл каярах, –
Анчах йăнăш тавăрать.

Çавăнпа та, тăвансем,
Сарă лĕпĕш пулар мар,
Чĕрери таса хĕлхем
Хăй суйлатăр, васкар мар.

*2013*

* * *

Суя юратусем татах та пулĕç,
Чăн юрату килет пĕрре кăна.
Чĕремĕрсем унпа телейлĕн çунĕç,
Эппин, ялан упрамалла ăна.

*2013*

* * *

Утмăлах та турат, утмăл турат,
Мĕнле çитмĕл турат тăвам-ши?
Калас сăмах çунать кăкăрăмра,
Хĕр тантăша мĕнле калам-ши?

Сарă савнин сенкер чӳречинчен
Сарă кайăк пулса пăхам-ши,
Вăл юратан юрра хăй сисиччен
Чун хевтипе шăрантарам-ши?

*2013*

## ПИРЕ ТАСА АТТЕ ПИЛЛЕРĚ

Пире таса атте пиллерĕ
Çӳлти Аттемĕр ячĕпе.
Сире телей сунатăп, терĕ,
Пĕр шутлăн пурăнма чипер.

Венчет çĕррийĕ тăхăнсассăн,
Пуç кăшăль пиллĕхне туйсан,
Тӳпе сенкерлĕхĕ тасатнăн
Чĕреçĕм сикрĕ ман тасан.

Эс ман çумра – телей парни пек,
Эпир – яланлăхах пĕрле,
Тавралăхра ешернĕн çимĕк
Малашлăх ыталать пире.

*2013*

* * *

Ярапаллă хурăн
Пуç таять çынна,
Пурăн, тет вăл, пурăн,
Юратап сана.

Кăвак хумлă Атăл
Пуç таять çынна.
Пурăн, тет, ан ватăл,
Юратап сана.

Çич çунатлă чăрăш
Пуç таять çынна.
Пурăн, тет вăл, тăрăш,
Юратап сана.

Пурте пил парасшăн
Çĕр çинчи çынна,
Çын майне пăвасшăн
Сĕмсĕр влаç кăна.

*2013*

* * *

Салтак тупа тăвать
Ялавĕ çумĕнче.
Савни сăмах парать
Савнийĕ умĕнче.

Суйланă сукмака
Ас ту, ан улăштар.
Каланă сăмаха
Вĕçсе кайма ан пар.

Аркатнă йăвине
Тек таврăнмасть куккук.
Аманнă чĕрене
Час сыватаймăн, çук.

Хуплу сĕтел çинче,
Нар питлĕ хăпарту,
Ик чунăр хушшинче –
Сăпайлă юрату.

*2013*

* * *

Пур тавра ешерет,
Вăта шывĕ умра.
Чунăмра – çĕн кĕтрет:
Эсĕ манăн çумра.

Тем те, тем те сунать
Пурнăçри ăмăрту,
Пурпĕр çĕклĕ çынна
Чĕрери юрату.

Чи хăватлă самант –
Çут тĕнче пил парсан,
Сăмаххи те ансат:
– Эпĕ сан, эсĕ ман.

Пур ыйту пуçланать
Çав ансат сăмахран,
Пĕтĕмпех татăлать
Пĕр-пĕрне ăнлансан.

*2013*

* * *

Хĕр чух хĕрĕх, тенĕ,
Аллă – каччă чух,
Çакна пĕлекенĕн
Кулянмалли çук.

Эсĕ те суйланă
Кирлĕ пеккине,
Эпĕ те шыранă
Чун юратнине.

Суйлавра тĕл пулнă
Иккĕн пĕр-пĕрне,
Çӳл тӳпе ăнланнă
Икĕ чĕрене.

Ыр сăмах – яланлăх,
Ĕмĕрлĕх – венчет,
Чун тӳрре тухмалăх
Пусрăмăр пичет.

Ик енне ямарĕ
Юрату йĕрки,
Сивĕнме памарĕ
Хĕвел пайăрки.

*2013*

* * *

Хăш чух кăшт хирĕçсе илетпĕр
Хирĕçмелли сăлтавсăрах.
Ик çыннăн икĕ ăс, пĕлетпĕр,
Чупмаççĕ пĕр йĕрпе вăрах.

Тăвată кустăрма чупаççĕ
Ялан тăватă йĕрпеле,
Çавах пĕр тиевех туртаççĕ
Умри лаша вăйĕпеле.

Кăшт кăмăла пĕçертнĕçемĕн
Вут чуль кăларнă чух хĕмне,
Пĕри пăртак чакма пĕлсессĕн
Питех аван ун пек чухне.

Çапла тумашкăн эп сĕнесшĕн,
Юратнă мăшăрăм, сана:
Ик тĕрлĕ пулнă самантсемшĕн
Айта-ха айăплар мана.

Каçар мана пĕлтĕрхисемшĕн,
Виçĕм çулхишĕн те каçар,
Йăлтах эп айăплă вĕсемшĕн,
Анчах та...
Юратма ан чар.

*2013*

* * *

Пурăнасчĕ, тетпĕр, ытларах,
Халь каймашкăн, тетпĕр, иртерех...
Анчах усалли чунăмăра
Тĕрлĕ эрешпе-çке илĕртет:
Е черкке пулса кĕрет алла,
Е пирус пулать те çулăхать,
Е наркотикĕ масаралла
Хура çĕлен сăхнă пек туртать.
Теприне тата сулнăкалла
Аскăн шухăш вĕçсĕр йыхăрать...

Тăвансем, асра тытар ялан:
Ĕмĕр тени килет хамăртан.
*2013*

## САМАНА

Пуяннисем татах пуйса пыраççĕ,
Чухăннисем ереççĕ чухăна.
Влаçрисемех пĕр шиксĕр çаратаççĕ
Ахаль те тĕкĕнсе çитен çынна.

Ача чухне ачалăхне курмарĕç
Хĕнпе асаплă вăрçă ачисем,
Паян та вĕсене асăрхамарĕç
Патшалăх Думинче ларакансем.

Завочĕсем, фабрикисем саланчĕç,
Пушах выртаççĕ уйсемпе хирсем.
Ĕç халăхне мĕскĕнлетес таланчĕ
Хăватлăн ешерет халь пуçлăхсен.

Лужковĕ, Сердюковĕ те Чубайсĕ –
Йăлтах пĕр çыхăри юн ĕçенсем.
Раççей чысне, ятне çĕртеççĕ майсăр
Бжезинский аллинчи сутăнчăксем.

Эп, Путин, тек сан сăмахна шанмастăп,
Шанас килмест, Медведев, ман сана.
Ман шанăçăм, тӳррипеле калас тăк,
Ĕçлĕ Раççей тăвăлĕнче кăна!

*2013*

## ЕНТЕШĔМЕ

Хулара яту та пулĕ,
Йыш çинче чысу та пулĕ,
Пурпĕр çулланас енне
Ан мансам Кайăкъялне.

Вăл аçу чĕлхипеле,
Вăл аннӳ чĕлхипеле
Ыр сунса сана ăсатнă,
Ан çухал тесе пил панă.

Йывăр вăхăтсем килсессĕн,
Такăнса илме тивсессĕн
Кайăкъяль сана хĕрхеннĕ,
Пулăшу ярам-и, тенĕ.

Пурнăçу ăнса пырсассăн,
Хисепӳ те хăпарсассăн
Савăннă санпа пĕрле
Кăнтăрла-и е çĕрле.

Çавăнпа та, тус-тăванăм,
Шутлă вăхăт шунă майăн
Ан пăрах Кайăкъялне,
Саншăн вăл – атте-анне.

*2013*

## ÇУТАТСАМ, ÇĂЛТĂРĂМ

*Надеждăна халаллатăп*

Пĕлетĕп эпĕ, пур ман çăлтăрăм,
Сенкер шевлеллĕ тӳпере,
Мана кăна ятарлăн, пайăррăн
Пăхса тăрать вăл тĕнчере.

Ун хĕлхемне каç-каç куратăп-и
Хур кайăк çулĕн çутинче,
Тăван ăшша хуллен туятăп эп
Умри сукмакăм кукринче.

Çутат, çутат, асамлă çăлтăрăм,
Хăв чуруна хавхалантар,
Чупсам çăмха пек кăлтăр-кăлтăрăн,
Эс ман пĕртен-пĕр пархатар.
*2013*

# ПĔР САНШĂН

Пĕр саншăн çӳлти тӳпере
Çутă хĕвел йăл кулать.
Сан сăну пек витĕрех
Чуна вăл лăпкăн ăшăтать.

Пĕр саншăнах шур садра
Чечексем çурăлаççĕ.
Ăшă пиллĕх курса санра,
Санра çеç ыр кураççĕ.

Ăнлан: пĕр саншăн кăна
Садсем сывлăмсем сапаççĕ.
Пĕр саншăн пур таврана
Тутлă шăршă сараççĕ.

*2013*

## ИР ИРТЕТ ТЕ,
## КАÇ КИЛЕТ

Ир иртет те, каç килет,
Пĕр эс çеç ман чунăмра.
Сенкер куçу, мăкăнь туту
Йăл кулаççĕ умăмра.

Эпĕ сана тĕл пулсассăн –
Маншăн эс – хĕвел пекех...
Эсĕ манран çухалсассăн –
Çутă хĕвел сӳнниех.

*2013*

# САНА ЮРАТСА ÇАК
# СĂВĂСЕНЕ ÇЫРАТĂП

Сана юратса çак сăвăсене çыратăп,
Тавтапуç сана вуланăшăн,
Мана ырласа хавхалантарнăшăн,
Вĕсене çырма çунатлантарнăшăн,
Енчен те эп çĕр çинчен çухалсан
Татах та вуласса шантарнăшăн.
*2013*

## ЮРАТУ

Юрату çулăмĕ çунса тăрсан
Çын вăл ĕмĕтлĕ те телейлĕ.
Юрату кăварĕ сӳнсе ларсан
Кашни кун сăнсăр, инкеклĕ.

*2013*

## ХĔВЕЛ АННĂ ЧУХ

Пурнăç вĕçĕ аякран
Курăна пуçларĕ,
Ав, чĕрен те хушăран
Сивĕнет кăварĕ.

Капана тăрланă чух
Тăррине хупласçĕ,
Тăвана, уйрăлас чух,
Ăш сăмах калаççĕ.

Çил те вĕрчĕ пурнăçра,
Тăвăл та алхасрĕ,
Шарт та шарт шартламара
Юрĕ-пăрĕ касрĕ.

Кăнтăрла-и е çĕрле
Аслати çӳрерĕ,
Çутатса кĕрле-кĕрле
Пире тĕрĕслерĕ.

Тăвансемĕр, тав сире,
Тайăлма памарăр,
Ĕшенес пулсан тӳрех
Çĕклесе тăратрăр.

Кайăкъялĕмĕр, тавах,
Хапху çирĕп юлтăр,
Чунтан тухнă çак сăмах
Ман пехилĕм пултăр.
*2013*

## САКĂР ВУННĂ

Шатăртатса килсен раштав
Ман пуçланать вара ăштав:

Ун çирĕм пĕрмĕш çавринче,
Ара, эп курнă-çке тĕнче!

Черетлесе кунран куна
Кăçал çитеп сакăр вунна.

Халех калап тус-тăвана:
Пуçтарăнсамăр хăнана!
*2013*

Спонсăра
**Александр Константинова**
ĕмĕрех сума суса

Александр Кузьмич Константинов – ман тăван Райка аппан ывăлĕ, майăн 26 кунĕнче 1964 çулта Канаш районĕнчи Çатăрка Çырми ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăтапуçĕнчи шкулăн саккăрмĕш класне пĕтерсен Канашра электромеханика тата шофера вĕренсе тухать. Заводра, больницăра ĕçлет. 1994 çултанпа предприниматель пулса çуртсене юсать, çĕнĕрен тăвать.

Саша Константинов спонсор пулса манăн икĕ кĕнекене «Дни, равные жизни» тата «Кайăкъяль кĕввисем» кăларма пулăшрĕ. Эпĕ ăна ĕмĕрĕпех тав тăватăп.

*Ырă, Саша, санăн кăмăлу,*
*Тăвансене паратăн пулăшу.*
*Ырă тăватăн вĕсене ялан,*
*Мухтанмасăр уншăн нихăçан.*
*Чиркӳ пек илемлĕ сан çурту,*
*Кӳлĕри пуллусемпе савăнать чĕрӳ,*
*Сар чечек пек санăн арăму,*
*Икĕ ывăл парнеленĕ сире юрату.*

*Автор*

*сăвă кĕнекин редакторне*
*Чăваш халăх поэтне*
***Юрий Семенович Сементере***
*тата*
*кĕнекене кăларма пулăшакансене –*
***Александр Кузьмич Константиновпа***
***Александр Вениаминович Архипова***

*чун-чĕререн тав тăвать*

ТУПМАЛЛИ

Кěнекене çыраканě ........................................ 4
Анне ........................................................ 6
Анне, кил-ха сĕтел хушшине (*Юрă*) ........................ 7
Икĕ салтак ................................................. 8
Пушкин пекех мухтатăп эпĕ Мускава .................... 9
Çăлкуç ..................................................... 10
Кайăкъяль çăлкуçĕсем ..................................... 11
Шыв-шур типсессĕн... ..................................... 12
Пурнăç ..................................................... 13
Кайăкъяль такмакĕсем ..................................... 14
Санпа тĕл пултăмăр ирпе... ............................... 16
Иртсе кайрĕ хĕл... ....................................... 17
Хĕвел пек .................................................. 18
Пушăлла чухне те... ...................................... 19
Эпĕ сисрĕм ................................................ 20
Сана саватăп .............................................. 21
Çуркунне пек килчĕ юрату ................................ 22
Хĕвелĕм .................................................... 23
Ан васка ................................................... 24
Кăн-кăваккăн килет кăвак шуçăм... ...................... 25
Сар сăнпала килет-çке хура кĕр... ....................... 26
Хур кайăксем вĕçеççĕ кăнтăра... ......................... 27
Улăхра текерлĕк макăрать... .............................. 28
Сивĕччĕ ирпе пахчамăрта .................................. 29
Пире вăй пачĕ пирĕн юрату ................................ 30
Çемье ...................................................... 31
Юрату та чирлеме пултарĕ... ............................. 32
Çурла ...................................................... 33
Ентешĕмсене ............................................... 34
Мами ялĕ... ................................................ 36
Валя йăмăкăма ............................................. 38

Чĕре ........................................ 39
Тутарстанăм ........................................ 40
Салам, Элли ........................................ 42
Валери Туркая ........................................ 43
Танăш ялĕн пĕви чаплă тет ........................................ 44
Герман Желтухина ........................................ 45
Шупашкар варринче... ........................................ 46
Шур кăмпа ........................................ 47
Шпион ........................................ 48
Мăкăнь ........................................ 49
Кайăксем ........................................ 50
Юрă ........................................ 51
Тăванăм... ........................................ 52
Çумăрпа юмăр ........................................ 53
Эс тухăçра... ........................................ 54
Куртăн-и, пикеçĕм... ........................................ 55
Мăшăр акăш вĕçетчĕ... ........................................ 56
Анна аппа канашĕ ........................................ 57
Çӳл тӳпери çăлтăр ........................................ 63
Шусах пырать кунсен черечĕ... ........................................ 64
Юрату сукмакĕ авкаланчăк... ........................................ 65
Лантăшсем ........................................ 66
Сан ятупа ........................................ 67
Мăнукăма ........................................ 68
Эпир юратăва упратпăр... ........................................ 69
Мăшăр акăш çӳллĕ тӳпере... ........................................ 70
Сарă лĕпĕш ........................................ 71
Суя юратусем татах та пулĕç... ........................................ 72
Утмăлах та турат, утмăл турат... ........................................ 73
Пире таса атте пиллерĕ ........................................ 74
Ярапаллă хурăн... ........................................ 75
Салтак тупа тăвать... ........................................ 76
Пур тавра ешерет... ........................................ 77

Хĕр чух хĕрĕх, тенĕ... .............................................. 78
Хăш чух кăшт хирĕçсе илетпĕр... ............................ 79
Пурăнасчĕ тетпĕр ытларах... ................................. 80
Самана ........................................................................ 81
Ентешĕме .................................................................. 82
Çутатсам, çăлтăрăм ............................................... 83
Пĕр саншăн ............................................................... 84
Ир иртет те, каç килет ........................................... 85
Сана юратса çак сăвăсене çыратăп ....................... 86
Юрату ........................................................................ 87
Хĕвел аннă чух ......................................................... 88
Сакăр вуннă .............................................................. 90

Григорьев Николай Григорьевич

**КАЛИКОВСКИЕ МОТИВЫ**
*Стихотворения*

Редактор ***Ю.С. Семендер***

Компьютерный набор *Архиповой Т.А.*
Вёрстка *Шутеевой Н.П.*
Дизайн обложки *Ильиной С.В.*

Подписано в печать 21.10.2013. Формат 70x90 $^{1}/_{32}$.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Arial. Физ.печ.л. 3.
Тираж 100. Заказ №361.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В.
"Новое Время".
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.